Çĕнтеруӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

98 (7738) № ✻ Юн кун, 2009 çулхи декабрĕн (раштав) 9-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Декабрĕн 9-мĕшĕ – Тăван çĕршыв паттăрĕсен кунĕ

Паттăрсем манăçмаççĕ

Православи тĕнне ĕненекенсем çулталăкра икĕ хутчен Якури (Юрий, Георгий) кунне асăнаççĕ: çу уйăхĕн 6-мĕшĕнче тата раштав уйăхĕн 9-мĕшĕнче.

Пĕлтĕртенпе Раççейре хĕллехи Георгий кунне Паттăрсен кунĕ тесе паллă тăваççĕ. Ку Георгий-Çĕнтеруçĕ сăнарĕ 14-мĕш ĕмĕртех Мускав гербĕ, каярахпа Раççей гербĕ çинче сăнланса юлнипе сыхăннă.

Çак кунсенче Уйкас Апашра çуралса ӳснĕ Совет Союзĕн Геройĕ Яков Анисимович Анисимов паттăрла пуç хунăранпа 65 çул çитрĕ. Виличчен пĕр уйăх çурă маларах паттăр ентеш 38 çул тултарнă пулнă. Унăн биографийĕпе Муркаш районĕн кĕске энциклопедийĕнче, музейра паллашма пулать. Паттăр пирки Социализмла Ĕç Геройĕн Е. Андреевăн тата ĕçпе вăрçă ветеранĕн, паллă педагогăн М. Гавриловăн аса илĕвĕсем те пур. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин фронтне хăй ирĕкĕпе тухса кайиччен пирĕн ентеш парти шкулĕнче вĕренме те, Хĕрлĕ Çарта пулма та ĕлкĕрнĕ пулнă. Çартан таврăнсан 1939 çултанпа Сĕнтĕр районĕн çар комиссарĕ пулса та ĕçленĕ.

Вăрçăри çапăçусене Я. А. Анисимов 1941 çулхи çурла уйăхĕнче кĕнĕ. Украина, Румыни, Венгри çĕршывĕсене тăшманран ирĕке кăларнă çĕре те хутшăннă. Паттăрлăхпа хăюлăхшăн нумай медальсемпе орденсене тивĕçнĕ. Гварди капитанĕ Я. Анисимов пирĕн çарсем Дунай урлă каçса йышăннă плацдарма тытса тăнă вăхăтра паттăрлăх кăтартса пуçне хунă. Ку вăл Венгри çĕршывĕнчи Эрчи поселокĕ çывăхĕнче раштав уйăхĕн 5-мĕшĕнче пулса иртнĕ. Паттăр ентешĕмĕре Совет Союзĕн Геройĕ ята вилнĕ хыççăн 1945 çулхи пуш уйăхĕн 24-мĕшĕнче панă.

Я. А. Анисимов паттăрлăхĕ çинчен республикăри хаçат-журналсем тĕплĕ каласа пани паллă. Сăмахран, 1974 çулхи «Ялав» журналăн 12-мĕш номерĕнче, «Советская Чувашия» хаçатăн 1988 çулхи нарăс уйăхĕн 5-мĕшĕнче тухнă номерĕнче т. ыт. те.

Паянхи кун Муркаш лицейĕнче 10-мĕш класра вĕренекен Оксана Михеева, Я. Анисимовăн мăнукĕ, паттăр ентеш çинчен реферат çырма материал пухать. Çак ĕçе вăл Аслă Çĕнтеруç 65 çул тултарнине халалласшăн.

В. ФЕДОРОВ.

Ăрусен паттăрла çыхăнăвĕ

Паттăр пулса çуралмаççĕ. Çак чыса халăхăмăршăн, Тăван çĕршыв ӳсĕмĕшĕн кĕрешсе тивĕçеççĕ. Эсир пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре куракан Николай Лукич Яковлевпа Раççей Федерацийĕн Геройĕ Евгений Германович Борисов – Тăван çĕршыва хӳтĕлекен ăрусен çыхăнăвĕ. Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Актайра çуралса ӳснĕ Николай Лукич Тăван çĕршыва нимĕç фашисчĕсенчен хӳтĕлесе паттăрлăх кăтартнă пулсан, Шупашкарта çуралса ӳснĕ, Тивĕшри вăтам шкултан вĕренсе тухнă Евгений Германович Çурçĕр Кавказри региона саккуна пăсса хĕç-пăшалланнă формированисемпе кĕрешсе 2000 çулхи февралĕн 21-мĕшĕнче Раççей Геройĕн ятне тивĕçнĕ.

Ăрусен паттăрла çыхăнăвĕ пирки калаçнă чух пирĕн çарсем 1979 -1989 çулсенче Тăван çĕршыв интересĕсене хӳтĕлесе çыртлă-туллă Афганистан çĕршывĕнче юн юхтарнине те манса кайма çук. Çак вăрçа пирĕн районтан 144 яш хуттăннă пулсан, 7-шĕ унта ĕмĕрлĕхех куçĕсене хупнă. Эсир иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре куракан Григорий Иосифович Соловьев (сулахайри) Çатракасси ял тăрăхĕнчи Çатракасси ялĕнче çуралса ӳснĕ, Афганистанра 1984 –1985 çулсенче службăра пулнă. «Аслă ăрусен паттăрлăхне сӳнме памарăмăр, ума лартнă тĕллевсене тивĕçлĕ пурнăçларăмăр», – терĕ унпа юнашар тăракан интернационалист-салтак Олег Мишуткин кĕске калаçура аслă ăрурисен паттăрлăхне чысласа.

А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕсем.

Республикăра

Президент Çырăвне кĕртме мĕн сĕнетĕр?

Республика Президенчĕ Н.В. Федоров халĕ ЧР Патшалăх Канашне тата Чăваш Ен халăхне яракан черетлĕ Çырăва хатĕрлет.

Çыру – никĕс вырăнĕнчи документ, унта халиччен мĕн тунине хакласçĕ, малашлăх тĕллевĕсене палăртасçĕ. Вăл – пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç хатĕрĕ: унта палăртакан мĕн пур тĕллев Правительствăшăн, Патшалăх Канашĕшĕн, влаçăн вырăнсенчи органĕсемшĕн, бизнесшăн ĕç программи пулса тăрать.

Çырăва хатĕрленĕ чухне конструктивлă мĕн пур шухăша шута илеççĕ. Эсир 2010 çул валли хатĕрлекен Çырăва кĕртме мĕн сĕннĕ пулăттăр? Сирĕн шухăшăрпа, республикăра пурăнакансен, Чăваш Ен хулисемпе ялĕсен пурнăçне лайăхлатас тесен мĕн тумалла?

Сирĕн Президента сĕнмелли е çак темăпа унран ыйтмалли пур пулсан – çапла тума пултаратăр.

Çак майпа усă курăр!

Сирĕн сĕнӳсене çак адреспа йышăнаççĕ: Чăваш Республики, Шупашкар хули, Республика лапамĕ, Правительство çурчĕ. Электрон почтипе те яма пулать: analit2@cap.ru. «Çыру хатĕрлеме» тесе палăртма ан манăр. 39-35-73 тата 39-35-75 телефонсемпе те çыхăнма май пур.

Тĕнче шайĕнчи Сывлăх центрĕ

Иртнĕ эрне кун Шупашкарта çĕнĕ йышши Сывлăх центрĕ уçăлчĕ. Ăна уçма ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров хутшăнчĕ.

Кунта кирек кам та хăйĕн сывлăхне тĕрĕслеттерме пултарать. Телефонпа çыхăнса тухтăр патне пыма меллĕ вăхăта çеç çырăнмалла. Çумра медицина страховани полисĕ пулмалла.

Сывлăх центрĕпе паллашнă май Н.В. Федоров çапла палăртрĕ:

- Диагностикăра хальхи йышши тата хăватлă техникăпа усă курни чир-чĕре пуçламăш тапхăртах тупса палăртма, çын сывлăхне упрама май парать. Технологи енчен хаклаçан çакă хула клиники çеç мар, тĕнчери чи лайăх стандартсен шайĕнчи центр.

Тулли диспансеризаци çынсене сывлăх тĕлĕшпе 1-2 ушкăнсене çирĕплетме май парать. Кирлĕ пулсан кашниех харпăр хăй программипе сывлăхне çирĕплетĕ.

Район администрацийĕнче

Хисеп грамотипе наградăланă

Район администрацийĕн пуçлăхĕн ноябрĕн 9-мĕшĕнчи 684 № йышăнăвĕпе район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

Ял хуçалăх производствинче нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн тата активлă обществăлла ĕçшĕн **Фекла Ивановна СМИРНОВАНА**, Хорнуй ялĕнче пурăнакана.

Район экономикипе социаллă аталанăвне тӳпе хывнăшăн тата активлă обществăлла ĕçшĕн **Павел Николаевич ВЯЗОВА**, «ВязПа» производствăпа строительство компанийĕ» общество ертӳçине.

Нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн тата активлă обществăлла ĕçшĕн **Александр Самсонович НИКОЛАЕВА**, «Декор» общество столярне.

Нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн:

Александр Афиногенович ЧАКАКА, Муркашри сĕт заводĕн водительне.

Анатолий Аркадьевич ФЕДОТОВА, Тивĕшри пуçламăш шкул-ача садĕн водительне.

Йыхрав

Черетсĕр лару

Депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн И.В. Николаевăн 2009 çулхи декабрĕн 4-мĕшĕнчи 38 № йышăнăвĕпе депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр 37-мĕш ларăвне 2009 çулхи декабрĕн 10-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче пухма йышăннă.

Кун йĕркине пăхса тухма çак ыйтусене кĕртнĕ:

1. «Депутатсен районти Пухăвĕн 2008 çулхи декабрĕн 5-мĕшĕнчи «Муркаш районĕн 2009 çулхи бюджечĕ çинчен» С-30/2 йышăнăвне улшăнусемпе хушусем кĕртесси çинчен.

2. Депутатсен районти Пухăвĕн 2007 çулхи сентябрĕн 7-мĕшĕнчи «Муркаш районĕнче ял хуçалăхне аталантарассин тата ял хуçалăх продукцине, чĕр таварпа апат-çимĕç продукчĕсене вырнаçтарассин 2008–2012 çулсенчи программи çинчен» С-20/3 йышăнăвне хушусем кĕртесси çинчен.

Депутатсен районти Пухăвĕн ларăвне ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, район администрацийĕн управленийĕсемпе пайĕсен пуçлăхĕсене, депутатсен районти Пухăвĕ çумĕнчи çамрăксен парламенчĕн представителĕсене йыхравлаççĕ.

Çĕнĕ çул уявĕ умĕн

Илемлĕн кĕтсе илер

Ял çыннисен пултарулăхне аталантарас, Муркаш ял тăрăхĕн территорийĕнче вырнаçнă предприятисемпе организацисен тата учрежденисен Çĕнĕ çул уявĕ умĕнхи илемлĕхĕпе хăтлăхне лайăхлатас тĕллевпе Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Никитин декабрĕн 1-мĕшĕнче ятарлă йышăну кăларнă. Унпа килĕшӳллĕн 2009 çулхи декабрĕн 14-мĕшĕнчен тытăнса декабрĕн 27-мĕшĕччен ял тăрăхĕн территорийĕнче вырнаçнă предприятисемпе организацисем тата учрежденисем хушшинче çурт-йĕрсен фасачĕсене тата территорисене Çĕнĕ çул уявĕ умĕн капăрлатассипе конкурс ирттерме палăртнă.

Хамăр инф.

ÇЫРĂНТАРУ

Хаклă вулакансем! Районти «Çĕнтеруç ялавĕ» хаçата 2010 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма унченхи хакпах çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак – 191 тенкĕ те 70 пус.

Юбилей

Саламлатпăр



Савнă мăшăра, хĕвелтен те ăшăрах аннене, сăпайлă та ĕçчен хĕрĕме, ылтăн-кĕмĕлрен те хаклăрах йăмăкăма – Муркаш салинче пурăнакан **Светлана Васильевна ДАНИЛОВАНА** 50 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал сунатпăр. Пурнăçу ăнса пытăр, ĕмĕтленни пурнăçлантăр.

Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, амăшĕпе ывăлĕ, аппăшĕпе шăллĕн çемйисем.

Хисеплĕ те хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăра, аттене, кукаçие, маçака, тăвана – Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан **Юрий Германович ИВАНОВА** 70 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Сана çак паллă кун ячĕпе саламласа пурнăçра мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Яланах çирĕп сывлăхлă пул, ĕмĕрӳ чăваш сурпанĕ пек вăрăм пултăр. Ачусемпе мăнукусем, çывăх тăванусем сана яланах савăнăçпа телей, савăк кăмăл парнелеччĕр. Пурнăçу ăнса пытăр, мĕн ĕмĕтленни пурнăçлантăр.

Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, тăватă мăнукĕ, тăванĕсем.